# Пăрлă шыв ран тухсанах фашистсене тĕп тума ыткăннă

**Муркаш çĕрĕ хăйĕн паттăр ывăлĕсемпе чăннипех те мухтанма-мăнаçланма пултарать. Ку тăрăхра çуралса ӳснĕ пилĕк каччă Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ. Раççей Геройĕ пулса тăнă икĕ артан пĕрин çинчен, тĕлĕнмелле çирĕп кăмăллă Николай Смирнов пирки, нумаях пулмасть çырнăччĕ. Хальхинче Пăсăрманта çут тĕнче курнă, çĕр-шыври чи пысăк наградăна 20 çултах тивĕçнĕ Илья Мешаков пурăннă, ĕçленĕ тăрăха çул тытрăм. Чăваш каччин паттăрлăхĕ çинчен Ярапайкассинче, ун çывăхĕнчи ялсенче кун кунлакансем каласа кăтартма пултараççĕ-ши?**



• Илья Мешаков Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ вăхăтра.

### Шкултанах – вăрçă хирне

Илья Григорьевич чухăн çемьере çуралнă, çапах шкула çӳреме вăй-хал çитернĕ. Лайăх вĕренекенскере учительсем тăтăшах мухтанă. Çав саманта Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хыççăн Совет Союзĕн Геройне каччă тухнă Софья Ивановна лайăх ас туса юлнă. "Ильяран тĕслĕх илĕр", – хистетчĕç Оринин шкулĕн педагогĕсем. Çурăм хыçне пир сумка çакса çӳрекенскере пăхаттăмăр та: "Кам вăл – Мешаков? Пĕчĕкскер кăна", – теттĕмĕр", – вилес умĕн каласа кăтартнă ĕмĕрне учительре ĕçлесе ирттернĕ Софья Ивановна ачисене, ентешĕсене.

Пăсăрман каччи шкул сукмакне такăрлатнă вăхăтрах "Аврора" колхозра тар тăкнă. Ăна çара 18 тултарнă-тултарманах, 1942 çулхи çурла уйăхĕнче, илсе кайнă. Йĕкĕт тӳрех вăрçă хирне лекнĕ. Хĕвел анăç, Кăнтăр хĕвел анăç, 2-мĕш тата 3-мĕш Украина фрончĕсенче çапăçнă.

– Аттене виçĕ хутчен амантнă, пĕррехинче фашист пульли ĕнсинченех лекнĕ. Кайран та унăн çав тĕлте çӳç шăтмарĕ, – аса илӳ çăмхине сӳтрĕ Илья Мешаковăн Шупашкарта пурăнакан аслă ывăлĕ Юрий.

### 12-ĕн çеç юлнă

Пăсăрман каччине пĕрле çапăçакан салтаксем шутсăр хисепленĕ, ят-сум çĕнсе илнĕскер Кăнтăр Бугĕ юхан шыв /халĕ Украина территорине кĕрет/ урлă каçнă чухне уйрăмах палăрнă. Герой ятне те ăна çавăншăнах панă.

Юхан шывăн тепĕр енчи фашистсене хăваласа ярас умĕн полк командирĕ Королев майор ротăна пынă. Унăн ертӳçине чи хастаррисене пухма ыйтнă. Çав йыша чăваш яшĕ те кĕнĕ – ара, вăл 1944 çул тĕлне пысăк ăсталăх пухнă-çке. Пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче юхан шыв урлă каçма хатĕрленнĕ ушкăн каç пуласса чăтăмсăррăн кĕтнĕ – вĕсен Кăнтăр Бугĕн тепĕр енчи нимĕçсене часрах тĕп тăвас килнĕ. Тĕттĕмленнĕ, таврана çăра тĕтре карнă. Совет салтакĕсем çула тухнă, пĕренесемпе усă курса сулă хатĕрленĕ, хăвăрттăн юхакан шыва аннă. Варринелле çитсен малта пыракан Мешаковăн сулли тӳннĕ те автоматчик пăрлă шыва мăйĕ таранах анса кайнă, çавçавах çыран хĕррине чи малтан çитнĕ. Ним шухăшласа тăмасăр тăшманăн пулемечĕсем патнелле ыткăннă, тĕм хыçне пытанса пĕрине тĕп тунă. Кăнтăр Бугĕн сулахай енĕшĕн хĕрӳ çапăçу пуçланнă. Унта та кунта снаряд сирпĕннĕ, Илья Григорьевич ăнакăна пăхмасăрах нимĕçсен траншейи патнелле вирхĕннĕ, ун хыççăн – ыттисем. Кунта гранатăсемпе усă курнă, алă вĕççĕн çапăçакансем те пулнă. Тăшман тӳсеймен – каялла чакнă. Алла пулин те пирĕннисем савăнма васкаман – ара, кĕçех тепĕр хут тапăнма пултараççĕ-çке-ха. Мешаков автомат магазинне тултарнă, гитлеровецсем асăрхасран пытаннă та куç умне фашистсем тухасса кĕтнĕ. Чăнах та, ир кӳлĕм тăшман хай çинчен аса илтернĕ. Пирĕн автоматчиксем вĕсене кĕске хушăрах çапса аркатнă. Унччен те пулмасть – тӳпере аяллăн вĕçекен самолетсем курăннă, хайхискерсем çак тăрăхри совет салтакĕсене, çар хатĕрĕсене çĕрпе танлаштарма палăртнă, анчах май килмен. Илья Григорьевич сĕннипе пирĕннисем нимĕçсен умнех сиксе тухнă, гранатăсем ывăтнă, трофей пăшалĕсем пĕтсен алă вĕççĕн кĕрешнĕ. Совет салтакĕсем 12-ĕн çеç юлнă, вĕсенчен чылайăшĕ аманнă. Çав вăхăтра хыçрисем çитнĕ, ура пусма çук çын виллиллĕ çĕр çинче çапăçу малалла тăсăлнă. Икĕ талăк иртсен нимĕçсем самай каялла чакнă. 20-ри каччăн награда хутĕнче 3-мĕш Украина фрончĕн çар генералĕ Родион Малиновский Илья Мешаков 6 фашиста вĕлернине, тепĕр 2-шне тыткăна илнине, тăшмана траншейăсенчен хăваласа кăларнине палăртса алă пуснă. Хăш-пĕр кĕнекере вара Пăсăрман яшĕ çав хирĕç тăрура 20 ытла нимĕçе тĕп тунине асăннă. Тĕрĕссине Илья Григорьевич хăй çеç пĕлнĕ-тĕр, анчах вăрçă çулĕсене аса илме кăмăлламанскер кун çинчен мăшăрне те, ачисене те, ентешĕсене те каласа кăтартман.

– Пуш уйăхĕнчи сип-сивĕ шывра ишме тивсен те, çийĕнче йĕп-йĕпе тум пулсан та паттăр ентешĕмĕр малаллах ыткăннă, Тăван çĕр-шывшăн хăйне хĕрхенмесĕр тăшмана парăнтарма васкана, – калаçу пуçарчĕ Ярапайкасси шкулĕн чăваш чĕлхипе литературин вĕрентекенĕ Надежда Васильева. – Çавăнпах нумай пурăнайман ĕнтĕ: темиçе хут аманнăскер, хытă шăннăскер чире кайнă – 47 çултах çут тĕнчерен уйрăлнă. Героя Ярапайкасси масарне пытарнă, чаплă палăка шкул вĕренекенĕсем пăхса тăраççĕ, паллă кунсенче чечексем пырса хураççĕ.

Шел те, хăш-пĕр энциклопедире, Интернетри сайтсенче Илья Григорьевича Пăсăрманта пытарнине палăртнă. Суя çак хыпар мĕнле майпа сарăлнă-ши?




• Надежда Васильева шкулти стендпа паллаштарать.



• Андрей Матюшкин паттăр ентешĕн вил тăпри умĕнче.

### Шлепкепе, çутă костюмпа çӳретчĕ

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи чарăнсан Çĕнтерӳ парадне хутшăннă паттăр каччă çуралнă тăрăхне таврăннă. Сидуккассинче учительсен кил-йышĕнче кун çути курнă Софья Ивановнăпа мăшăрлансан çамрăк çемье Мускав облаçне тухса кайнă. Арçын Перово хулинче ĕçленĕ хушăрах вăтам шкул пĕтернĕ. Тăван ене таврăнсан Шупашкарти педагогика институтĕнче ăс пухнă, Муркаш райкомĕн секретарĕнче, учительре, директорта тăрăшнă. Ермакра çурт-йĕр çавăрнă Мешаковсем сад ĕрчетнĕ, пыл хурчĕсем тытнă, виçĕ ывăла ура çине тăратнă. Асли Юрий халĕ кĕçĕн хĕрĕн çемйипе пурăнать, тепри Георгий, Хусан консерваторийĕнче вĕреннĕскер, ир çĕре кĕнĕ. Виççĕмĕшĕ Саратов облаçĕнчи Балаково хулинче тĕпленнĕ.

– Мешаковсем тĕлĕнмелле типтерлĕ, илемлĕ мăшăр пулнă. Ял çыннисем аса илнĕ тăрăх – хăшĕ-пĕри вĕсем иртсе кайнине чарăнса тăрса сăнанă, теприсем хĕрпе каччă пек чипер çӳрекенскерсене куçран тинкерме вăтаннă, хыçалтан çеç çаврăнса пăхма вăй-хăват çитернĕ, – палăртрĕ Надежда Михайловна шкулти стендсемпе паллаштарнă май. – Вĕсем яланах тирпейлĕ тăхăннă. Кил хуçи шлепкепе, çутăрах костюм тăхăннă, галстук çыхнă.

Илья Григорьевич ачисене çавăтса пулла çӳрени çинчен Ярапайкассисем каçса кайсах каласа кăтартрĕç. Ку сăмаха Совет Союзĕн Геройĕн ывăлĕ хирĕçлемерĕ.

– Çумăр витререн тăкнă пек çусан та, аçа-çиçĕм çиççен те Юлача шывĕ хĕррине утаттăмăр. Атте пулă тытма шутсăр юрататчĕ. Аслатиррен хăранине систерсен те: "Ан шикленĕр, вăл сире тĕкĕнмĕ. Акă вăлтана теприне çаклататпăр та кайăпăр", – тетчĕ. Каярахпа сăн ӳкерессипе аппаланма пуçларĕ. Ярапайкасси шкулĕн директорĕнче вăй хунă май лайăх вĕренекенсене сăн ӳкерсе стенд хатĕрлерĕ. Пĕр ĕçрен те пăрăнмастчĕ. Пĕлӳ çуртне вутăпа хутса ăшăтнăран чылай чухне вăрмана мана та илсе каятчĕ, – иртнине куç умне кăларчĕ Юрий Ильич.

Паллă ентешĕн çутă сăнарне чылайăшĕ манман. Акă тивĕçлĕ канури Вера Данилова шкулта пĕлӳ пухнă самантa аса илчĕ:

– Вăрçă хыççăнхи çулсенче çуралнă куна никамах та паллă туман. Пĕррехинче Илья Григорьевичпа Софья Ивановна класа кĕчĕç те: "Паян Верăн çуралнă кунĕ. Саламлатпăр", – терĕç, канфетпа сăйларĕç. Тĕрĕссипе, эпĕ çав кун çуралнине ун чухне тавçăрман та.

Ялта чи илемлĕ çурт хăпартнăскерсем мăн кăмăлланса нихăçан та çӳремен, çĕр-шывĕпе кĕрленĕ хорта юрланă, иртенçӳренпе яланах сăмах хушнă, пĕчĕккисене ыйту памасăр пăрăнса утман.

– Çул çинче курсан Илья Григорьевич ăсталла васканипе, мĕн ĕçленипе кăсăкланатчĕ, – калаçăва хутшăнчĕ Геннадий Хлебников вĕрентекен. – Эпир çитнĕ вăхăта вăл яланах шкултаччĕ. Ун çине турă çине пăхнă пек тинкереттĕмĕр.

### Ăна манмаççĕ

Муркашсем хăйсен чаплă ентешне манмаççĕ. Ун ячĕпе Ярапайкассинче çулсеренех спорт мероприятийĕсем йĕркелеççĕ. Ака уйăхĕнче иртекен тупăшу умĕн районти чылай шкулта паттăрлăх сехечĕсем пулаççĕ. Оринин шкулĕн ачисем /сăмах май, пĕлӳ çурчĕ умĕнчи асăну хăми çине Пăсăрман каччи 1934-1941 çулсенче шăпах çакăнта ăс пухнине палăртнă/ истори учителĕпе пĕрле Илья Григорьевичăн вил тăпри умне пуç тайма çуран каяççĕ. Центрти Мухтав аллейинче те, музейре те Героя хисеплени курăнать.

– Ăмăртуччен класс сехечĕ ирттеретпĕр. Ачасене ентешĕмĕр еплерех çирĕп кăмăллă пулни, вилĕмрен хăраманни çинчен каласа кăтартатпăр. Чылайăшĕ алă çĕклет, тĕрлĕ ыйту парать. "Эсир ăна курнă-и, унпа калаçнă-и?" – теççĕ. Вĕренекенсем кăсăкланни савăнтарать, – чунне уçрĕ Надежда Михайловна.

Шел те, Илья Мешаков ячĕпе районти пĕр шкул та, ытти учреждени те хисепленмест. Ярапайкасси вăтам шкулне паттăр ятне мĕншĕн парас мар? Вăл унта чылай çул тăрăшнă-çке. Çитменнине, Пĕтĕм Союзри учительсен 1968 çулхи съездне хутшăннăскер: "Ачасене юратни – Тăван çĕр-шыв малашлăхĕшĕн тăрăшни", – тенĕ. Вышкайсăр пысăк пĕлтерĕшлĕ çак сăмахсене кашни пĕлӳ çуртĕнче çырса çапсан та ытлашши пулмасть-тĕр.

**Дмитрий МОИСЕЕВ.**

**Автор тата çемье архивĕнчи сăн ӳкерчĕксем.**